- хутшăну задачисене кура ку е вăл чĕлхе хатĕрĕ суйласа илсе пĕр-пĕр жанр законĕсем тăрăх текст (калав, хаклав, çыру, расписка, шантару, заявлени) тума пултани;
- монологпа диалог тĕсĕсене пĕлни; ачан хăйĕн тантăшĕсем умĕнче кĕске хыпар вуласа пама, доклад тума хăнăху пурри;

- çырура орфографипе пунктуаци правилисене пăхăнни;
- чĕлхе хатĕрĕсем вырăнне пуплев хатĕрĕсемпе (мимикăпа, алă хусканăвĕпе) вырăнлă усă курни;
- харпăр хăй тунă текста лайăхлатма тата редакцилеме вăй çитерни.

4) чăваш чĕлхине тĕпчекен ăслăлăхăн никĕсне ăша хывни; чĕлхен шайĕсемпе единицисем хушшинчи çыхăнусене ăнланни;
5) чĕлхе ăслăлăхĕн тĕп ăнлавĕсене алла илни: чĕлхе вĕрентĕвĕ тата унăн тĕп пайĕсем; чĕлхе тата пуплев, пуплевпе усă курса хутшăнни, калаçу тата çыру; монолог тата диалог; пуплев ситуацийĕ; пуплевĕн функципе шухăшран килекен тĕсĕсем (калав, сăнлав, ăслав); текст; чĕлхе единицисем, вĕсен паллисем тата пуплевре усă курнă чухнехи уйрăмлăхĕсем;
6) сăмаха фонетика, тытăмĕ, пулăвĕ, лексика енчен тишкерме пĕлни, сăмах майлашăвĕпе предложение синтаксис енчен тишкерни; текста ун содержанийĕ, тĕп паллисемпе тытăмĕ енчен, пуплевĕн функцире палăракан тĕсĕсене кура, чĕлхе уйрăмлăхĕсене пăхса, илемлĕх хатĕрĕсене шута илсе тишкерни;
7) тăван чĕлхен эстетика функцине ăнланса илни, илемлĕ литература тексчĕсене тишкернĕ май пуплев единицин илемлĕхне курма пĕлни.

**Вĕренекенсен çаксене пĕлмелле *(Ученик научится)*:**
- вулавăн пур тĕсне те алла илни (ăнланулла, паллашулла, тишкерӳллĕ (пăхса тухни) вулав) тата вуланă материала ăша хывни;
- аудированин мĕн пур тĕсĕпе ĕçлеме пултарни (мĕн пурне ăнланса, тĕп содержанине ăнланса, хăш-пĕр информацие суйласа илсе) тата чĕлхен тĕрлĕ функциллĕ уйрăмлăхне шута илсе текста тĕрĕс информацилени;
- текстсене кирлĕ пек ăнланма, шухăшне тĕрĕс уçса пама тата текст тĕсĕсене шута илсе (калав, сăнлав, ăслав) ăнлантарса пама пултарни;
- полилогра тата диалогра хутшăнма, калаçу тĕллевне, ситуацине, сферăна кура чăваш литература чĕлхин нормисене тата пуплев этикетне тытса пырса монолог тума пултарни;
- чăваш литература чĕлхин тата пуплев этикечĕн нормисене шута илсе тĕрлĕ жанрлă, стильлĕ текстсене йĕркелеме пĕлни тата редакцилеме пултарни;
- текстăн тĕп шухăшне, темине, тĕллевне ăнланса текста тишкерме пĕлни;
- чĕлхен нормине (орфоэпи, орфографи, лексика, грамматика нормисене) пăхăнма;
- орфографи тата пунктуаци правилисене тĕрĕс усă курса çырма;
- сăмах пĕлтерĕшĕсене ăнлантарма, синонимсем, антонимсем е омонимсем тупма;
- текст планĕ тума, текстăн темипе тĕп шухăшне палăртма;
- шухăша йĕркипе, вĕçе-вĕçĕн каласа е çырса пама, сăнарлă мелпе усă курма, пĕр-пĕр сăмахпа вырăнсăр усă курассинчен хăтăлма;
- кĕнекепе, словарьсемпе тата ытти пĕлӳ хатĕрĕсемпе, вĕсен шутĕнче хаçат-журналпа та Интернетпа, ĕçлеме хăнăхăвĕ пулни;
- сайра тĕл пулакан сăмахсен пĕлтерĕшĕсемпе словарь тăрăх паллашса вĕсене пуплеве кĕртсе пыма;
- вĕреннĕ пуплев пайĕсен формисемпе пуплевре тĕрĕс усă курма;
- предметра усă куракан чĕлхе единицисене пĕр-пĕринчен уйăрма, вĕсене ăнланма, унсăр пуçне хăйсен ĕçĕсене хак пама, çырнине тĕрĕслеме тата тĕрĕс информаци пама;
- хутсăр тата хутлă предложенире чарăну паллисене тĕрĕс лартма, вĕсене ăнлантарма;
- сăмахсене лексика тата морфологи тишкĕрĕвĕ тума, сăмах тытăмне пĕлме, хутсăр тата хутлă предложенисене тишкерме;
- ĕç хучĕсем çырма.

**Вĕренекенсен çаксене тума пултармалла (*Ученик получит возможность научиться)*:**
- сăмахсене тĕрĕс, вырăнлă тата илемлĕ калас тĕлĕшĕнчен пăхса хăйĕн тата ют çын калаçăвне хак пама пултарни;
- палăртнă результат тăрăх калаçу ситуацийĕпе ăнăçулăха пăхса хăй тухса калаçнине тишкерме; калаçу ăнăçсăрлăхĕн тĕп сăлтавĕсене ăнланма тата ăнлантарма пултарни;
- конспект, хаклав, реферат, статья, доклад, интервью çырма пултарни;
- пĕр-пĕр темăпа доклад тума, тухса калаçма пултарни;
- тĕрлĕ калаçăва хутшăнма, хăй шухăшне аргументсемпе çирĕплетсе пама пултарни;
- сăмах тымарне тупса малалла пĕр тымарлă çĕнĕ сăмахсем тума пĕлни;
- хăйсем тĕллĕн вĕренӳ тĕллевне палăртма, хăйсем валли вĕренӳре аталанас тĕлĕшпе çĕнĕ задачăсем лартма, йĕркелеме; хăйсен пултараслăхне, интересĕсене аталантарма; ăнăçлă мелсем суйласа илсе хăйсен тĕллевне пурнăçлама пултарни.

## Чăваш чĕлхи предмечĕн содержанийĕ – 5 класс

## V класс (70 сехет)

**Пуçламăш классенче вĕреннине аса илсе çирĕплетесси, хушса вĕрентесси *(12 сехет)***

Тăван чĕлхе пур чух халăх та пур (кӳртĕм урок)
Сасă тата сас палли. Алфавитри сас паллисен йĕрки, вĕсен хисепĕ.
Сăмах тытăмĕ, тымар тата аффикссем.
Вĕреннĕ пуплев пайĕсене аса илесси.
Хутсăр предложени, унăн членĕсем.
Пĕр йышши членсем, вĕсем союзсăр е союзсемпе çыхăнни. Пĕр йышши членсене чарăну паллисемпе уйăрасси.
Чĕнӳ сăмахĕсем (обращенисем), вĕсене чарăну паллисемпе уйăрасси.
Туйăмлă (кăшкăруллă) предложенисем. Предложени вĕçне чарăну палли лартасси.
Ыйтусăр тата ыйтуллă предложенисем. Ыйту сăмахĕсем: кам? мĕн? ăçта? хăçан? миçе? мĕншĕн? мĕн пирки? т.ыт.те. Ыйтуллă предложенисене ыйтусăррисенчен уйăрма хăнăхасси. Ыйтăва тĕрĕс йĕркелеме, ăна тĕрĕс хуравлама хăнăхасси (тулли хуравпа кĕске хурав).
Союзсăр (çыхăну паллисĕр) тата сыпăнуллă хутлă предложенисем, вĕсенче чарăну паллисем лартасси.
Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисем. Тӳрĕ пуплев автор сăмахĕсем умĕн е хыççăн тăни, чарăну паллисем лартасси.
Текст. Текстăн теми, тĕп шухăшĕ. Текст пайĕсем.
Текст тĕсĕсем: калав, сăнлав, ăçслав (текстсене калав тата çыру кĕввине кура ушкăнласси).

**Фонетика, графика, орфографи *(*26 сехет*)***

Уçă сасăсем, вĕсен мăшăрлăхĕ (хытă тата çемçе уçă сасăсем). Вырăсларан йышăннă сăмахсенчи [о] уçă сасă.

Уçă сасăсене палăртакан сас палли сем (**а, ă, е, ĕ, у, ӳ, ç, ы, и, э, ю, я,**). Ю, я сас паллисем, вĕсем икĕ сасса (***йурă, йухать***) умĕнхи хупă сасă çемçелĕхне ***(выля, Люся)*** палăртни. Е сас палли икĕ сасса ***(йешĕл, йепле)*** тата [э] сасса палăртни ***(этем, элек)***.

Чăваш чĕлхинчи [й] хупă сасă ытти уçă сасăсем умĕн те тăма пултарни: ***йăмра, йĕлтĕр, йывăр, йӳçĕ, йӳçĕтнĕ, кĕсйи***.

Чăваш сăмахĕсенче икĕ уçă сасă юнашар тăма пултарайманни.

Вырăсларан йышăнакан сăмахсенчи уçă сасăсен юнашарлăхĕ ***(аэропорт, аут, поэт, Дуайт)***.
Сăмахри уçă сасăсен килĕшĕвĕ (сингармонизм). Ку килĕшĕве пăхăнман тĕслĕхсем ***(тăри, кавле, куклен, парне*** т.ыт.те).

Сăмахри аффикссем ытларах чух сингармонизма пăхăнни ***(çурт-ра, пӳрт-ре, пур-лăх, çитмен-лĕх, лар-у, кĕт-ӳ)***. Сингармонизма пăхăнман аффикссем: ***юлташ - сем, ял - ти, юрă – юрри, кай - иччен*** т.ыт.те.

Вырăсларан йышăнакан сăмахсем сингармонизма пăхăнманни ***(орден, тетрадь, депо)***. Вырăсларан йышăнакан сăмахсем çумне хушăнакан аффкссен хытăлăхĕпе çемçелĕхĕ.
Хупă сасăсем. Ялан янăравлă (в, й, л, ль, м, н, вь, р) тата шавлă хупă сасăсем (к, п, т, х, с, ç, ч, ш).
Хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхĕ, уçă сасăсенчен килекен çемçелĕх ***(пилеш, кĕлет, тĕлĕк)***, уçă сасăсенчен килмен çемçелĕх ***(халь, выльăх, супăнь, курать, юрать).***

Хытăлăхпа çемçелĕх йĕркине пăхăнман хупă сасăсем (с, ç, ч, й), вĕсем хытă уçă сасăпа та, çемçе уçă сасăпа та юнашар тăма пултарни: ***сарă — симĕс, çурла — çӳхе, чарăн– чĕрĕк, йурă — йӳнĕ.***
Шавлă хупă сасăсем янăраса е янăрамасăр илтĕнни, вĕсене çырура палăртасси.
Хупă сасăсем вăрăммăн илтĕнни, вĕсене çырура палăртасси ***(кулă — кулли, ырă — ырри, ахаль — ахальлĕн*** т.ыт.).

Вырăс чĕлхинчен йышăнакан сăмахсенчи хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхĕ, вĕсене çырура палăртасси. ***Промышленность — промышленноçăн, повесть — повеçре*** йышши сăмахсене çырасси.
Икĕ пĕрешкел сасăпа вĕçленекен сăмахсене çырасси ***(металл — металăн, металшăн, класс — класра, класăн*** т.ыт.те).

Вырăсларан çыру урлă йышăнакан сăмахсенче б, г, д, ж, з, ф, ц, щ, ӳ сас паллисене çырасси.
Ударени (пусăм). Чăваш сăмахĕсенчи ударени йĕрки. Вырăс чĕлхинчен йышăнакан сăмахсенчи ударени.

Уçă сасăсемпе хупă сасăсем сăмахран тухса ӳкни: ***эпĕ — эп, эсĕ — эс, вунă — вун, пурăн — пурнăç, тăхлачă — тăхлач, пар — патăм, панă; тăр — тăтăм, тăнă.***
Сасăсен ылмашăвĕ ***(хут — хучĕ, тетрадь — тетрачĕ)***.

*Чăваш чĕлхинчи сасăсемпе вырăс чĕлхинчи сасăсем, вĕсен пĕр пеклĕхĕпе уйрăмлăхĕсем.

*Чăваш сăмахĕсенчи ударенипе вырăс сăмахĕсенчи ударени.

II. Орфографипе орфоэпи нормисене çирĕплетессипе ĕçлесси. Хупă сасăсен çемçелĕхне тăван сăмахсенче тата вырăс чĕлхинчен йышăнакан сăмахсенче çырура тĕрĕс палăртасси. Шавлă хупă сасăсен янăравлăхĕпе янăравсăрлăхне çырура тĕрĕс палăртасси. Хăнăхусене çирĕплетесси.

Сӑмахсене тӗрӗс ударенипе калама хӑнӑхтарасси.
Орфографи словарӗпе тата правилисемпе усӑ курма хӑнӑхтарасси.
Алфавита пӑхмасӑр калама вӗрентесси. Сӑмахсенче алфавитпа ҫырма вӗрентесси.

**Лексика** ***(17 сехет)***

Лексика — чӗлхери сӑмахсен пуххи. Лексика пурнӑҫри улшӑнусемпе тачӑ ҫыхӑнни. Кивелнӗ е кивелсе пыракан сӑмахсем, ***кӳнтелен «свидетель», чуптар*** (лаша тӗсӗ), ***шупӑр, йӗлен*** т.ыт. Ҫӗнӗ сӑмахсем, ***ентешлӗх*** (пӗр енчисем), ***юлташлӑх «товарищество», ӗҫтеш, ентеш, интернет, продюссер, коммерци, компьютер, фирма, слайд, ипотека*** т.ыт.

Сӑмах пӗлтерӗшӗ. Нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем. Сӑмахсен тӳрӗ тата куҫӑмлӑ пӗлтерӗшӗсем. Ютран йышӑннӑ сӑмахсем, араб е перс сӑмахӗсем, мари сӑмахӗсем. Вырӑссенчен йышӑннӑ сӑмахсем, калаҫупа йышӑннисем ***(витре, пӗремӗк, пӗрене, пӑрӑс, кӗрепле, чиркӳ*** т.ыт.). Ҫырупа йышӑннисем ***(костюм, галстук, пальто, район, область, тетрадь, блокнот, магазин*** т.ыт.).

Калаҫупа кӗнисемпе ҫырупа кӗнисене ҫырура палӑртасси.

Синонимсем, антонимсем, омонимсем.

Ятарлӑ сӑмахсем (профессионализмсем). Диалект сӑмахӗсем.

Литература нормине пӑхӑнман сӑмахсем ***(ан палка, лӑпӑртат, епреме)***, киревсӗр сӑмахсем.

II. Калаҫу мӗнле лару-тӑрура (кампа, хӑҫан, ӑҫта) иртнине кура сӑмахсемпе вырӑнлӑ усӑ курма хӑнхтарасси ***(Хӑна килсен аш пиҫет; Ҫук ҫын укҫи тӑрнан кӑшкӑрать; Ҫук — вӑрҫтарать, пур — култарать*** т.ыт.те.). Ваттисен сӑмахӗсемпе, каларӑшсемпе паллаштарасси, вӗсемпе тӗрӗс усӑ курма хӑнӑхтарасси.

Синонимсемпе антонимсене тупма, вӗсемпе пуплевре усӑ курма вӗрентесси. Тӗрлӗ йышши словарьпе (орфографи словарӗпе, синоним словарӗпе, чӑвашла-вырӑсла е вырӑсла-чӑвашла словарьпе) паллаштарасси, вӗсемпе усӑ курма вӗрентесси.

Пӗлтерӗш тӑрӑх сӑмахсене ушкӑнлама хӑнӑхтарасси (тӗслӗхрен, апат-ҫимӗҫ, пахча ҫимӗҫ, ҫи-пуҫ, йывӑҫ, кайӑк-кӗшӗк, тырӑ-пулӑ ячӗсем), ҫав сӑмахсемпе пуплевре тӗрӗс усӑ курма вӗрентесси (сӑмахран, ***чӗкеҫ чӗвӗлтетет, ҫерҫи чӗриклетет, курак краклатать, ҫӑхан кранклатать, куккук авӑтать, карӑш (путене) авӑтать, шӑпчӑк (тӑри, шӑнкӑрч)*** юрлать т.ыт.те.

Сӑмах тытӑмӗпе пулӑвӗ.

**Орфографи** ***(11 сехет)***

Сӑмах тымарӗ. Аффикссем — сӑмах тӑваканнисем тата сӑмаха улӑштараканнисем.

Сӑмаха улӑштаракан аффикссем ҫӗнӗ сӑмах тума пултарни: ***каярахпа, тӑхтарахпа, каҫпа, ирпе; лӗмрен, авалтан; пӗрерӗн, виҫшерӗн; кӑмӑллӑн, хаяррӑн, ҫиллессӗн*** т. ыт.те.

Мӑшӑр сӑмахсем, вӗсене тӗрӗс ҫырасси. Икӗ хут калакан сӑмахсене тӗрӗс ҫырасси.

Хутлӑ сӑмахсем, вӗсен тӗсӗсем, тӗрӗс ҫырасси.

Сӑмах вырӑнӗнче ҫӳрекен пӗрлешӳсем, вӗсен тӗсӗсем, тӗрӗс ҫырасси, ят пӗрлешӳсем ***(куҫ харши, пит ҫӑмарти, тур палли, кача пӳрне, ҫӗнӗ ҫын, упа сарри*** т.ыт.); глагол пӗрлешӳсем ***(ырӑ ту, кӑмӑл ту, усал ту, ҫула ҫит, пӗве кӗр, тӑлӑха юл, ҫука юл; такӑнса ӳк, чирлесе ӳк, хӑраса ӳк, ватӑлса кай, ватӑлса ҫит , т.ыт*** те ).

II. Ҫӗнӗ сӑмаха сӑмах форминчен уйӑрма вӗренесси (тӗслӗхрен, ***пулӑш — пулӑшать, пулӑшакан, пулӑшни*** — сӑмах формисем; ***пулӑшу, пулӑшуҫӑ*** — ҫӗнӗ сӑмахсем).

Тӑтӑшрах тӗл пулакан аффикссем хушса ҫӗнӗ (иккӗмӗшле) сӑмахсем тӑвасси, вӗсемпе пуплевре усӑ курасси.

Словарьсенче ***йӑлана кӗр, ӳте кӗр, татӑлса ан, ҫакӑнса тӑр*** евӗр пӗрлешӳсене тупма хӑнӑхасси. Ҫав пӗрлешӳсене пуплеве кӗртесси, калаҫура асӑрхама вӗренесси.

Сӑмах пулӑвӗпе ҫыхӑннӑ орфографи хӑнӑхӑвӗсене ҫирӗплетесси ***(хӑю — хӑюлӑх, хӑюллӑ; хастар — хастаррӑн; вырт — выртттар, ирт — ирттер*** т. ыт. т.).

Сӑмахсенче пӗрле, уйӑрм тата дефиспа ҫырмалли правилӑсене ҫирӗплетесси.

**Вӗреннине аса илсе пӗтӗмлетесси (4 сехет)**

## Чӑваш чӗлхи предмечӗн содержанийӗ – 6 класс
## VI класс (70 сехет)

**V класра вӗреннине аса илесси (3 сехет, ҫав шутра пуплеве аталантарма – 2 сехет)**

**Морфологипе орфографи. (1 сехет)**

Чӗлхери сӑмахсен ушкӑнӗсем. Пуплев пайӗсем:
- хӑй пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем: тулли пӗлтерӗшлисем, тулли маар пӗлтерӗшлисем;
- пулӑшу пӗлтерӗшлисем;
- междометисем.

**Япала ячӗсем (14 сехет, ҫав шутра пуплевпе ҫыру ӑсталӑхне аталантарма – 3)**

Япала ячĕн пĕлтерĕшĕ, морфологи паллисем, синтаксис уйрăмлăхĕсем (мĕнле пуплев пайĕсене ăнлантарни).
Япала ячĕсен тăтăшлăхĕ, паллă ячĕ пек те, наречи пек те ҫӳреме пултарни: *йывăç çурт, улма йывăç, чул кĕпер; кĕркунне çитрĕ – кĕркунне час-часах çумăр çăвать; Мăн кун эрни иртрĕ – чăваш чĕлхи урокĕ эрнере виççĕ пулать.*
Тулли мар пĕлтерĕшлĕ япала ячĕсем – *тĕл, пат, ум, хыç, ай, çи, çум, çĕр (каланă çĕрте) т.ыт.те*. Хăш-пĕр япала ячĕсем туллии маар пĕлтерĕшпе те, тулли пĕлтерĕшпе те ҫӳреме пултарни: *вăхăт, самант, хушă, çул, кун, сехет т.ыт.те*
Пайăр тата пайăр мар ятсем.
Япала ячĕсен хисепĕ – пĕрреллĕ тата нумайлă хисеп. Хисеп тăрăх улшăнман ятсем. Пĕрреллĕ хисепĕн пуплеври уйрăмлăхĕсем.
Нумайлăха палăртмалли мелсем: *ял-ялсем; ял-ял витĕр тухрăмăр; чылай çын, чылайăшĕ, ытларахăшĕ (лексика мелĕ).*
Япала ячĕсен пулăвĕ: аффикссем хушăнни, мăшăрланни *(сĕтел-пукан, апат-çимĕç, иртен-çӳрен*). Япала ячĕ тăвакан тухăçлăрах аффикссем: *-лăх (-лĕх), -çă (-çĕ), -у (-ÿ), -ăç (-ĕç), -ăм (-ĕм) т.ыт.те.*
Япала ячĕсен вĕçленĕвĕ. Вĕçленӳ уйрăмлăхĕсем. Япала ячĕсен падеж системине кĕмен аффиксĕсем*: -ри (-ти, -чи), -хи, -лă (-лĕ), -сăр (-сĕр), --ла (-ле), -серен, -чен.* Ку аффикслă япала ячĕсене паллă ячĕсемпе наречисенчен уйăрасси.
Камăнлăха палăртмалли мелсем. Камăнлăх формисем (сăпатсемпе хисепсем).
Камăнлăх форми (3-мĕш сăпат) ҫыхăнăва палăрма пултарни: *кĕтӳ ачи, шкул ачи, пуç тутри, мăй тутри.*
Вырăс чĕлхинчен йышăнакан япала ячĕсен вĕçленĕвĕ.
Вырăс чĕлхинчен йышăнакан япала ячĕсен вĕçленĕвĕ, вĕçленӳ формисене тĕрĕс çырасси.
**Паллă ячĕсем (10 сехет, çав шутра пуплевпе çыру ăсталăхне аталантармалли урок – 2)**
Паллă ячĕсен пĕлтерĕше, морфологи паллисемпе синтаксис уйрăмлăхĕсем. Паллă ячĕ ытти пуплев пайĕ пĕлтерĕшĕпе ҫӳрени.
Паллă ячĕсен пахалăх виçине кăтартакан формисем: тĕп форма (*вашă, çамрăк),* танлаштару форми (*ватăрах, çамрăкрах),* вăйлă форма *(питĕ ватă, чи ватă, шутсăр ватă, çав тери ватă, чи çамрăк, çап-çамрăк, ытла та çамрăк)*. Çав формăсене тумалли мелсем.
Танлаштару тата вăйлă формăри паллă ячĕсене тĕрĕс çырасси.
Иккĕмĕшле паллă ячĕсем, вĕсен пулăвĕ: *çывăхри, паянхи, çĕрлехи, пĕрлехи* – паллă ячĕсем; *хулари, шкулти, Етĕрнери, Хусанти* – япала ячĕсем. Вырăнлă, вырăнсăр, черетлĕ, черетсĕр – паллă ячĕсем, *икĕ вырăнлă купе, виçĕ чӳречеллĕ пӳлĕм* – япала ячĕсем.
Пахалăха хакланине палăртакан паллă ячĕсем: *пĕчĕк – пĕчĕкçĕ, имшер – имшеркке, çăмăл – çăмăлттай.*
Паллă ячĕсем –и, -скер палăрту формин аффиксĕсене йышăнни, çав аффикслă формăсен улшăнăвĕ, улшăнăва кура тĕрĕс çырасси.
Паллă ячĕсен пуплеври вырăнĕ, вĕсем япала ячĕ умĕнче *(кăвак пĕлĕт*), япала ячĕ вырăнĕнче *(куç хитрене юрарать; ырăран ырă шырамаççĕ),* глагол çумĕнче ҫӳреме пултарни (*сăмаха тĕрĕс кала).*
Тулли мар пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем *(вăрман витĕр, хулапа юнашар, çул тăрăх, урам урлă), вĕсем тулли пĕлтерĕшпе те ҫӳреме пултарни (çил витĕр вĕрет, юнашар кил, тăрăх пăхса утать, урлă урам).*
**Хисеп ячĕсем (7 сехет, çав шутра пуплевпе çыру ăсталăхне аталантарма – 2)**
Хисеп ячĕсен пĕтĕмĕшле паллисем: пĕлтерĕшĕ, морфологипе синтаксис уйрăмлăхĕсем (мĕнле сăмахпа çыхăнма пултарни). Хисеп ячĕ ытти пуплев пайĕ пĕлтерĕшĕпе ҫӳрени.
Тулли тата вак хисепсем. Хисеп ячĕсен ушкăнĕсем: шут хисепĕсем, йĕрке хисепĕсем, валеçӳ хисепĕсем, пĕтĕмлетӳ хисепĕсем, вĕсен паллăрах уйрăмлăхĕсем, пуплеври вырăнĕ.
Шут хисепĕсен тулли тата кĕске формисем.
Шут хисепĕсем –ри (-ти) аффикс йышăнии *(вуннăри шăллăм, çирĕм виççĕри аппа, вăтăрти ар çын, çитмĕлти асатте).*
Хисеп ячĕсен вĕçленĕвĕ, вĕçленӳри уйрăмлăхсем. Хисеп ячĕсене тĕрĕс çырасси.
**Местоимени (8 сехет, çав шутра пуплевпе çыру ăсталăхне аталантарма – 2)**
Местоименисен пĕлтерĕшĕ, морфологи паллисем, синтаксис уйрăмлăхĕсем.
Местоимени ушкăнĕсем (пĕтĕмĕшле паллатарасси).
Местоименисен вĕçленĕвĕ. Местоименисене тĕрĕс çырасси.
**Наречи (3 сехет)**
Наречин пĕлтерĕшĕ, ытти пуплев пайĕсенчен уйăрмалли паллăсем. Наречисен пулăвĕ.
Наречипе япала ячĕ, наречипе паллă ячĕ, наречипе деепричасти.
Наречисене тĕрĕс çырасси.
Калаçура тата çырура синоним тата антоним наречисемпе усă курасси *(нарастаран – айăпсăр, хăвăрт – хуллен – майĕпен – ерипен).*
Наречипе ытти пуплев пайĕсен синонимлăхĕ *(васкаса – васкавлăн, хуллен – васкамасăр).*
Наречисемпе тан пĕлтерĕшлĕ сăмах ушкăнĕсем *(ялан – пĕрех май, пĕр май)*

**Евĕрлев сăмахĕсем (3 сехет,  çав шутра пуплевпе çыру ăсталăхне аталантарма – 1)**
Евĕрлевсен пĕлтерĕшĕ, пуплеври вырăнĕ. Евĕрлев сăмахĕ ытти пуплев пайĕ пĕлтерĕшĕпе çӳрени. Евĕрлевсен тĕсĕсем: сасă евĕрлисем, сăнар евĕрлисем.
Евĕрлевсен вариантлăхĕ  (*шăлтăр –шăлтăр – шăлтăр-шалтăр; шĕпĕр-шĕпĕр – шепĕр-шепĕр, шапăр-шапăр (çумăр).* Вариантсен пĕлтерĕшĕ улшăнма пултарни.
Евĕрлевсенчен ытти пуплев пайĕсенчи сăмахсем пулни *(лапăртат, лĕпĕртет, танкăлтата, чанклат, тĕнкĕлтет; лăпăрти, ахăлти, пакăлхи, ихĕлти, якăлти)*, çав сăмахсен стиль уйрăмлăхĕсем.
**Глаголсем (13 сехет,  çав шутра пуплевпе çыру ăсталăхне аталантарма – 3)**
Глагол пĕлтерĕшĕ, тулашри паллăсем. Глагол тĕпĕ. Вăл глаголшăн пуçламăш форма (е словарь форми) пулни.
Глаголăн пулаю форми (*пĕлтĕм – пĕлейрĕм – пĕлеймерĕм*).
Глаголăн сăпатлă формисем.
Кăтарту наклоненийĕ, вăхăт, сăпат, хисеп тăрăх улшăнни.
Кăтару наклоненийĕ, унăн вăхăчĕсем: хальхи вăхăт, иртнĕ вăхăт, пулас вăхăт. Иртнĕ вăхăт формисем: пĕрре иртнĕ вăхăт (*куртăм, куртăн, курчĕ*), темиçе иртнĕ вăхăт *(кураттăм, кураттăн, куратчĕ*). Кăтару наклоненийĕнчи глаголсене тĕрĕс çырасси.
Хушу наклоненийĕн формисене тĕрĕс каласси тата *çырасси (кайччăр, вулаччăр – кайччĕр, вулаччĕр е кайчăр, вулачăр* мар).
Ĕмĕт наклоненийĕ,унăн формисене тĕрĕс çырасси.
Килĕшӳ наклоненийĕ, унăн пĕлтерĕшĕ, сăпатланăвĕ.сăпатлану формисене тĕрĕс çырасси.
Глагол формисен пĕлтерĕшĕ улшăнни.
**Текст (5 сехет,  çав шутра пуплевпе çыру ăсталăхне аталантарма – 2)**
Текст тĕсĕсем (çыру манерĕ): калав, сăнлав, ăслав.
**VI класра вĕреннине аса илесси – 3**

## Чăваш чĕлхи предмечĕн содержанийĕ – 7 класс
## VII класс (70 сехет)

### VI класра вĕреннине аса илесси

Япала ячĕсен пуплеври тăтăшлăхĕ,  вĕсем паллă ячĕ пек те, наречи пек та çӳреме пултарни: *йывăç çурт, улма йывăçĕ, чул кĕпер; кĕркунне çитрĕ; кĕркунне час-часах çумăр çăвать; Мăнкун эрни; Чăваш чĕлхи урокĕ эрнере иккĕ пулать.*
Хăш-хăш япала ячĕсем тулли тата тулли мар пĕлтерĕшпе те çӳреме пултарни: *кун иртет те çул иртет* – тулли пĕлтерĕшлĕ;  *унтанпа кун иртрĕ е çул иртрĕ* теме çук; миçе кун е миçе çул иртнине калас пулать *(пĕр кун иртрĕ, виçĕ çул иртрĕ)* – тулли мар пĕлтерĕшлĕ.

### ГЛАГОЛĂН СĂПАТСĂР ФОРМИСЕМ

### Сăпатсăр формăсен ушкăнĕсем

Сăпатсăр формăсен ушкăнĕсем: причасти, деепричастии, инфинитив. Сăпатсăр формăсене сăпатлисенчен тата пĕр-пĕринчен уйăракан паллăсем. Сăпатсăр формăсен пелтерĕшĕсем, пуплеври тăтăшлăхĕ.

### Причасти

**I.** Причастин тухăçлă тата тухăçсăр формисем.
**Хальхи причасти:** унăн формисем – **-акан(-екен)** тата **–ан(-ен)** аффикссем. Хальхи причасти падеж тата хисеп тарăх улшăнни.
Хальхи причастин çуклă форми, вал иртнЕ причастиннипе пер килни: *вулакан кĕнеке –  вуламан кĕнеке; вуланă кĕнеке – вуламан кĕнеке.* Хальхи причастин пуплеври вырăнĕ: *тăрăшакан ача; таракана пĕр çул, хăвалакана çĕр çул; ывăл ача ашшĕне, хĕр ача амăшне хывакан; вăл çынпа хирĕçекен мар ( хирĕçмест); ача утакан пулчĕ.*
Хальхи причасти **–и** тата **–скер** аффикс йышăнни.
**Иртнĕ причасти,** унăн çуклă форми пуплеври вырăнĕ (*ĕçленĕ ĕç, ĕçленĕ чух* (е *хыççăн*), *ачасем перемеăна тухнă).*
Иртнĕ причасти **–и** тата **–скер** аффикссем йышăнни, çав аффикслă формăсем падеж тата хисеп тăрăх улшăнни.
Иртнĕ причастин сказуемăй пулнă чухнехи вăхăт пĕлтерĕшĕ.
Иртнĕ причастин пуплеври тăтăшлăхĕ, унăн **–и** аффикслă форми япала ячĕн вырăнĕнче çӳрени.
**Пулас причасти,** унăн çуклă формисем тата хăш-пĕр падеж формисем *(каяссăн, каясса; хĕвел анаспа; чирлесрен сыхлан).* Пулас причастин ***–шăн(-шĕн)*** аффикслă форми, унăн пуплеври вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ.
Пулас причастин пуплеври вырăнĕпе тăтăшлăхĕ.
Хальхи, иртнĕ, пулас причастисен *пул* глаголлă пĕрлешĕвĕсем: *Ача утакан пулчĕ. Анне ĕçе кайнă пулнă. Ĕçе вăхăтра тăвас пулать. Вĕсен пĕлтерĕшĕ.*

**Пулмалли причасти,** унăн формисем, пуплеври вырăнĕ.
**Çителĕклĕх причастийĕ,** унăн пулăвĕ, пуплеври вырăнĕ, пĕлтерĕшĕ.
**II.** Причастисен пĕлтерĕшĕпе пуплеври вырăнне сăнасси. Причасти формисемпе тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси: *Пурăнан пурнăçу телейлĕ пултăр; Атте ĕçрен таврăнасса кĕтетпĕр (таврăнассине* мар*); Ĕç ăнăçлă вĕçленессе шанатăп (вĕçленессине* мар*).*
Причастисемпе ытти пуплев пайĕсен синонимлăхĕпе паллаштарасси: *канмалли кун – кану кунĕ, вуламалли кĕнеке – вулав кĕнеки; мухтанакан çын – мухтанчăк çын, çĕтĕлнĕ кĕпе – çĕтĕк кĕпе* т.ыт.те.
Иртнĕ причастипе тата пĕрре иртнĕ вăхăт формисемпе пуплевре вырăнлă усă курасси: *Эпĕ ку çынна таçта курнă (куртăм* мар*). Ман атте ялта ӳснĕ (ӳсрĕ* мар*). Пурăннă тет пĕр карчăкпа старик (пурăнчĕç* мар*).*

**Деепричасти**

**I.** Деепричасти пĕлтерĕшĕ, унăн уйрăмлăхĕсем, пуплеври вырăнĕ.
Тăтăшрах тел пулакан деепричасти формисем, вĕсен вариантлăхĕ: **-сан(-сен), -сассăн(-сессĕн), -нăçемĕн (-нĕçемĕн), -нăçем(-нĕçем), -иччен, -са(-се), -а(-е).**
**II.** Деепричастипе синонимă формăсем, вĕсемпе вырăнлă усă курасси: *килсе çӳре – килех çуре, кăçал Хусана кайса пулмарĕ – кăçал Хусана каяймарăм, васкавлăн – васкаса, тухса ӳкнĕ – тухнă ӳкнĕ* т.ыт.те.

**Инфинитив**

Инфинитив формисем: ***-ма(-ме), -машкăн(-мешкĕн)*** аффикслисем. Вĕсен пуплеври вырăнĕ.
Чăваш чĕлхинчи инфинитивпа вырăс чĕлхинчи инфинитив, вĕсен уйрăмлăхĕ.

## ПУЛĂШУ СĂМАХĔСЕМ

**Хыççăмахсем** (4 сехет)

**I.** Хыççăмахсен пĕлтерĕшĕпе уйрăмлăхĕсем.
Хыççăмахсемпе тулли мар пĕлтерĕшлĕ сăмахсем (япала ячĕсемпе паллă ячĕсем, наречисем): *вăрман çийĕн, вăрман хĕррипе, вăрман витĕр, вăрман урлă, çын хыççăн кай.*
**II.** Хыççăмахсемпе тулли мар тата тулли пĕлтерĕшлĕ сăмахсене пĕр-пĕринчен уйăрма вĕрентесси (*хыççăн çӳре* – тулли пĕлтерĕшлĕ, *уяв хыççăн* – хыççăмах, *ăшĕ нимĕр, тулĕ тимĕр* – тулли пĕлтерĕшлĕ, *юр ăшне чик* – тулли мар пĕлтерĕшлĕ).

**Союзсем**

**I.** Союзсен пĕлтерĕшĕпе пуплеври вырăнĕ. Сыпăнуллă тата пăхăнуллă союзсем, вĕсен уйрăмлăхĕ, ушкăнĕсем.
Сыпунăллă союзсемпе наречисем, татăксем: *анчах(рах) килтĕм* – наречи; *уйăх çутатать, анчах ăшăтмасть* – союз; *эпĕ ăна пĕрре анчах курнă* – татăк.
Пăхăнуллă союзсемпе тулли мар пĕлтерĕшлĕ глагол формисем: *сывлăхлă пулас тесе* – союз; *эп сана Мускава кайнă тесе* – тулли мар пĕлтерĕшлĕ глагол форми.
**II.** Союзсемпе пуплевре тĕрĕс усă курасси *(Ванюк, Верук тата Санюк; Ванюкпа Верук тата Санюкпа Нинук).* Союзпа синонимлă формăсемпе вырăнлă усă курасси: *сана курас тесе килтĕм – сана курма килтĕм – сана курасшăн килтĕм.*

**Татăксем**

**I.** Татăксен пĕлтерĕшĕ, уйрăмлăхĕсем. Татăксене тĕрĕс çырасси.
**II.** Татăксем предложени содержанийĕпе тата унăн тытăмĕпе çыхăннине ăнланма хăнăхтарасси.

**Междомети**

**I.** Междометисен ытти пуплев пайĕсем хушшинчи вырăнĕ. Междометисене тĕрĕс çырасси, вĕсем хыççăн чарăну палли лартасси.
**II.** Пуплевре междометисемпе вырăнлă усă курма хăнăхтарасси.

**Вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси**

Тулли пĕлтерĕшлĕ сăмахсем тата тулли мар пĕлтерĕшлисем. Пулăшу сăмахĕсем. Вĕсен уйрăмлăхĕ.
Мĕншĕн междомети тулли пĕлтерĕшлĕ сăмахсем шутне те, пулăшу сăмахĕсен шутне те кĕмест?
Чăваш тата вырăс чĕлхисенче паллă ячĕсен уйрăмлăхĕсене ăнкарса илесси. Мĕншĕн чăваш чĕлхинчи паллă ячĕсем вырăс чĕлхинчи пек икĕ ушкăна уйрăлмаççĕ?
Вырăс чĕлхинче евĕрлевсем пур-и? Эсир вĕсенчен хăшне-хăшне пĕлетĕр? Калаçура вĕсемпе усă куратăр-и?

**Çыру ăсталăхĕпе çыхăнуллă пуплеве аталантарасси**

Калаçăва е çырăва тикĕс, уçăмлă, таса тума хăнăхтарасси. Шухăша вĕçе-вĕçĕн (пĕрин çинчен тепри çине куçса каймасăр) йĕркелесе пырасси. Калаçура «çӳпĕллĕ» сăмахсем те, ытлаши илемлетни те кирлĕ мар.
Калаçупа çыру чĕлхинчи уйрăмлăхсене асăрхама, вĕсене пăхăнма вĕрентесси. Тĕслĕхрен, калаçура глаголсен кĕске формисем (*каяп, каймас, каян, вăл каймаç йышшисем*) пĕрре те килĕшӳсĕр мар. Çырура вара тулли формăсем вырăнлăрах. Калаçăва диалект сăмахĕсем е вĕсен формисем кĕме пултараççĕ: *уйла* (*шухăшла* вырăнне) *пахча алтрăмăр* (*чаврăмăр*), *хăнча* (*хăçан* вырăнне) çырура вара литература нормисене çирĕпрех тытса пырас пулать.

## Чăваш чĕлхи предмечĕн содержанийĕ – 8 класс
## VIII класс (70 сехет)

**Кӳртĕм калаçу (1 сех.)**

Тăван чĕлхене упрасси кашни çыннăн тивĕçĕ пулнине ăнланса илме пулăшасси.

**Вĕреннине аса илни (3 сех.)**

Глагол. Глаголăн сăпатлă тата сăпатсăр формисем. Сăпатсăр формăсен ушкăнĕсем: причасти, деепричастии, инфинитив. Сăпатсăр формăсене сăпатлисенчен тата пĕр-пĕринчен уйăракан паллăсем. Сăпатсăр формăсен пелтерĕшĕсем, пуплеври тĕтăшлăхĕ.

**Предложенин тĕп тата кĕçĕн членĕсем (12 сех.)**

Хутсăр предложенин грамматика тытăмĕ. Предложени членĕсем. Тĕп членсемпе (подлежащипе сказуемăй) кĕçĕн членсем (определени, дополнени, обстоятельство).

Предложени членĕ пĕр сăмахлă та, темиçе сăмахлă та пулма пултарни.

Предложенири сăмах тепĕр сăмахпа та, сăмах майлашăвĕпе те, подлежащипе сказуемăй пĕрлĕхĕпе те çыхăнма пултарни.

Подлежащипе сказуемай ушкăнĕсем, вĕсем хушшине тире лартасси. Подлежащипе сказуемăй ушкăнĕсемпе пĕтĕмĕшлĕн çыхăнакан сăмахсем.

**Тĕп членсăр предложенисем (3 сех.)**

Тĕп членсăр предложенисен тĕсĕсем. Тĕп членсăр (подлежащисĕр, сказуемăйсăр е харăсах иккĕшĕсĕр) предложенисем.

**Кăткăсланнă хутсăр предложенисем (13сех.)**

Пĕр йышши членсем. Союзсăр тата союзпа çыхăнакан пĕр йышши сăмахсем. Пĕр йышши членсем çумĕнчи пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем. Чарăну паллисемпе уйăрасси.

Чĕнӳ. Ансăр тата анлă чĕнӳ.Чĕнӳсен предложенири вырăнĕ. Чарăну паллисемпе уйăрасси.

Кӳртĕмсем, вĕсен пĕлтерĕшĕ. Чарăну паллисемпе уйăрасси.

Диалог тата монолог.

Тулли мар предложенисем. Тулли мар предложенисен содержанийĕ пуплевре (калаçура е çырура) уçăмланни.

**Уйрăмлатнă сăмахсем (5 сех.)**

Уйрăмлатакан сăмахсем. Предложенире сăмахсене интонаципе уйрăмлатнин тĕллевĕ – вĕсен шухăш çыхăнăвне палăртасси.

Интонаципе уйрăмлатакан сăмахсене çырура чарăну паллисемпе уйăрасси.

**Урăх çын сăмахĕсене пĕлтермелли мелсем (10 сех.)**

Тӳрĕ тата тӳрĕ мар пуплевлĕ предложенисем. Тӳрĕ пуплевлĕ преложенисем, вĕсенче тӳрĕ пуплевпе автор сăмахĕсем епле вырнаçни. Диалог. Ăна çырура еплерех йĕркелесси.

Тӳрĕ мар пуплевлĕ предложенисем. Тӳрĕ тата тӳрĕ мар пуплевлĕ предложенисенчи чарăну паллисем.

Тӳрĕ тата тӳрĕ мар пуплеве автор сăмахĕсемпе çыхăнтаракан глаголсем.

Цитата, ăна çырура чарăну паллисемпе палăртасси.

Эпиграф, унпа çырура тĕрĕс усă курасси.

Пайăр мар тӳрĕ пуплев.

**Хутлă предложени (6 сех.)**

Хутлă предложени. Хутлă предложени çинчен пĕтĕмĕшле ăнлантарасси (хутлă предложение хутсăррисенчен уйăрмалли тĕп паллă). Хутлă предложенири хутсăр предложенисене çыхăнтармалли мелсем: союзсем, союзла сăмахсем, хыç сăмахсем, аффикссем, пайсен вырăнĕ-йĕрки, интонаци пĕрлĕхĕ.

Хутлă предложени тĕсĕсем: çыхăну паллисĕр хутлисем; çыхăну паллиллĕ хутлă предложенисем (сыпăнуллă, пăхăнуллă хутлисем).

Çыхăну паллисĕр хутлă предложенисем.Çыхăну паллисĕр хутлă предложенири хутсăр предложенисен çыхăнăвĕ, пĕлтерĕшĕ. Çыхăну паллисĕр хутлă предложенисенче чарăну палли лартасси.

**Чĕлхе тата пуплев (14 сех.)**

Чĕлхепе пуплев хушшинчи тачă çыхăну. Пуплев тата хутшăну. Пуплев ĕçĕ-хĕлĕ. Чĕлхен функцирен килекен тĕсĕсем.

Стиль тĕсĕсем. Ĕçлĕ стиль.

**Вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси (3 сех.)**

## Чăваш чĕлхи предмечĕн содержанийĕ – 9 класс
## IX класс (51 сехет)

**Кӳртĕм калаçу (1 сех.)**

Чăваша чăваш чĕлхи кирлĕ.

**Вĕреннине аса илни (1 сех.)**

Чĕлхе наукин пайĕсем. Текст тĕсĕсем. Хутсăр предложенисем. Хутлă предложенисен тĕсĕсем.

**Сыпăнуллă хутлă предложенисем (23 сех.)**

Сыпăнуллă хутлă предложенисен тĕсĕсем.
Сыпăнтаракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем.
Сыпăнтаракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси.
Хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем.
Хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси.
Уйăракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем.
Уйăракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси.
Сыпăнуллă хутлă предложенисене тишкересси.
«Сыпăнуллă хутлă предложени» темăна вĕреннине аса илмелли тĕрлĕ ыйтупа ĕç.

**Пăхăнуллă хутлă предложенисем (26 сех.)**

Пăхăнуллă хутлă предложени пайĕсем.
Пăхăнуллă предложение тĕп предложенипе çыхăнтаракан мелсем.
Пăхăнуллă предложенин хутлă пĕрлĕхри вырăнĕ.
Пăхăнуллă хутлă предложенисенче чарăну палли лартасси.
Пăхăнуллă хутлă предложени ушкăнĕсем.
Пăхăнуллă хутлă предложенисене тишкермелли йĕрке.
Союзлă пăхăнуллă хутлă предложенисем.
Союзла сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисем.
Хыç сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисем.
Пайĕсене аффикссемпе çыхăнтаркан пăхăнуллă хутлă предложенисем.
Пайĕсене **-и** аффикспа çыхăнтаркан пăхăнуллă хутлă предложенисем.
Пайĕсене падеж аффиксĕсемпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисем
Пайĕсене падеж системине кĕмен аффикссемпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисем.
Пайĕсене глаголăн деепричасти аффиксĕсемпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисем.
Пайĕсене причасти аффиксĕсемпе çыхăнтаркан пăхăнуллă хутлă предложенисем.
Пайĕсене вырăнĕ-йĕркипе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисем.
Пăхăнуллă хутлă предложенисене вĕреннине аса илмелли тĕрлĕ ĕç.

**Кăткăс тытăмлă хутлă предложенисем (13 сех.)**

Хутлă предложенисем кăткăсланни.
Кăткăс тытăмлă çыхăну паллисĕр хутлă предложенисем.
Кăткăс тытăмлă сыпăнуллă хутлă предложенисем.
Кăткăс тытăмлă пăхăнуллă хутлă предложенисем.
Хутлă предложенисене вĕреннине аса илмелли тĕрлĕ ĕç.
Синтаксиса вĕреннине аса илмелли тĕрлĕ ĕç.

**Текст (4 сех.)**

Чĕлхе, пуплев тата çыру.
Чăваш çырăвĕн аталанăвĕпе паянхи сăн-сăпачĕ.
Публицистика стилĕ.
5 – 9 классенче вĕреннине аса илмелли тĕрлĕ ĕç.

**5-мĕш класра чăваш чĕлхин тематика планĕ**

| № п/п | Пайсем | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| 1. | Тăван чĕлхе пур чух халăх та пур (кӳртĕм урок)<br>Пуçламăш классенче вĕреннине аса илсе çирĕплетесси, хушса вĕрентесси | 20 |
| 2. | Фонетика, графика, орфографи | 42 |
| 3. | Лексика | 25 |
| 4. | Сăмах тытăмĕпе пулăвĕ. Орфографи. | 13 |
| 5. | V класра вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси | 2 |
| | Пĕтĕмпе | 68 |

**6-мĕш класра чăваш чĕлхин тематика планĕ**

| № п/п | Пайсем | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| 1 | Кӳртем | 1сехет |
| 2 | V класра вĕреннине аса илесси | 2 |
| 3 | Чĕлхери сăмахсен ушкăнĕсем. Сăмахсен тытăмĕ | 1 |
| 4 | Япала ячĕсен пĕлтерĕшĕ, морфологи паллисем, синтаксис уйрăмлăхĕсем | 14 |
| 5 | Паллă ячĕсен пĕлтерĕшĕ, морфологи паллисем, синтаксис уйрăмлăхĕсем | 10 |
| 6 | Хисеп ячĕсен пĕлтерĕшле паллисем: пĕлтерĕшĕ, морфологипе синтаксис уйрăмлăхĕсем | 7 |
| 7 | Местоименисен пĕлтерĕшĕ, морфологи паллисем, синтаксис уйрăмлăхĕсем | 8 |
| 8 | Наречи пĕлтерĕшĕ, вĕсене уйармалли паллăсем. Наречисен пулăвĕ | 3 |
| 9 | Евĕрлевсен пĕлтерĕшĕ, пуплеври вырăнĕ. Евĕрлевсен тĕсĕсем, сăнар евĕрлевĕсем | 3 |
| 10 | Глаголсен пĕлтерĕшĕ, морфологи паллисем, синтаксис уйрăмлăхĕсем | 13 |
| 11 | Текст тĕсĕсемпе стилĕсем | 5 |
| 12 | Вĕреннине пĕтĕмлетни | 1 |
| Пурĕ | | 68 |

**7-мĕш класра чăваш чĕлхин тематика планĕ**

| № | Пайсем | Сехет шучĕ |
|---|---|---|

| | | |
|---|---|---|
| 1. | Кӳртӗм | 1 сехет |
| 2. | VI класра вӗреннине аса илни | 1 сехет |
| 3. | ГЛАГОЛĂН СĂПАТСĂР ФОРМИСЕМ<br>Сăпатсăр формăсен ушкăнĕсем | 3 сехет |
| 4. | Причасти | 9 сехет |
| 5. | Деепричасти | 5 сехет |
| 6. | ПУЛĂШУ СĂМАХĔСЕМ<br>Хыçсăмахсем | 5 сехет |
| 7. | Союзсем | 6 сехет |
| 8 | Татăксем | 4 сехет |
| 9 | Междомети | 2 сехет |
| 10 | Синтаксис тата пунктуаци .Чĕлхе тата пуплев | 16 сехет |
| 11 | Ыйтуллă тата ыйтусăр предложенисем | 4 сехет |
| 12 | Пурлă тата çуклă предложенисем | 4 сехет |
| 13 | Текст | 3 сехет |
| 14 | Вĕреннине пĕтĕмлетни | 5 сехет |
| | Пĕтĕмпе | 68 |

**8-мĕш класра чăваш чĕлхин тематика планĕ**

| № п/п | Пайсем | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| 1 | Кӳртĕм | 1сехет |
| 2 | Вĕреннине аса илни | 3 сехет |
| 3 | Предложенин тĕп тата кĕçĕн членĕсем | 12 сехет |
| 4 | Тĕп членсăр предложенисем | 3 сехет |
| 5 | Кăткăсланнă хутсăр предложенисем | 12 сехет |
| 6 | Уйрăмлатнă сăмахсем | 5 сехет |
| 7 | Урăх çын самахĕсене пĕлтермелли мелсем | 9 сехет |
| 8 | Хутлă предложени | 7 сехет |
| 9 | Чĕлхе тат пуплев | 11 сехет |
| 10 | Текст | 7 сехет |
| 11 | Вĕреннине аса илни | 1 сехет |

| | |
|---|---|
| Пĕтĕмпе | 68 |

**9-мĕш класра чăваш чĕлхин тематика планĕ**

| № п/п | Пайсем | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| 1 | Кўртĕм | 1 |
| 2 | 8-мĕш класра вĕреннине аса илни | 1 |
| 3 | Сыпăнуллă хутлă предложенисем | 23 |
| 4 | Пăхăнуллă хутлă предложенисем | 26 |
| 5 | Кăткăс тытăмлă хутлă предложенисем | 13 |
| 6 | Текст | 3 |
| 8 | Вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетни | 1 |
| Пĕтĕмпе | | 68 |